ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН
САККУНĔ

ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН "ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН СУЙЛАВ КОМИССИЙĔ ÇИНЧЕН" САККУНĔН 6 СТАТЙИНЕ УЛШĂНУСЕМ КĔРТЕССИ ÇИНЧЕН

Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕ
2024 çулхи çĕртме уйăхĕн 14-мĕшĕнче
йышăннă

1 статья

Чăваш Республикин "Чăваш Республикин Суйлав комиссийĕ çинчен" 1999 çулхи утă уйăхĕн 1-мĕшĕнчи 12 №-лĕ саккунĕн (Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн ведомоçĕсем, 1999, 31 №; 2003, 53 №; 2005, 64 №; 2006, 72 №; 2007, 73 №; 2008, 77 №; 2009, 80, 82 №-сем; 2010, 86, 87 №-сем; 2012, 92, 95 №-сем; Чăваш Республикин Саккунĕсен пуххи, 2013, 3, 10 №-сем; 2014, 6 №; 2015, 5, 10 №-сем; 2016, 2, 4 №-сем; "Республика" хаçат, 2017, чӳк уйăхĕн 8-мĕшĕ; 2019, юпа уйăхĕн 18-мĕшĕ; 2020, çу уйăхĕн 13-мĕшĕ, авăн уйăхĕн 30-мĕшĕ; 2021, раштав уйăхĕн 8-мĕшĕ; 2022, çу уйăхĕн 5-мĕшĕ, утă уйăхĕн 13-мĕшĕ; 2023, ака уйăхĕн 5-мĕшĕ, çу уйăхĕн 31-мĕшĕ, юпа уйăхĕн 4-мĕшĕ; "право21.рф" сеть кăларăмĕ, 2023, раштав уйăхĕн 21-мĕшĕ, 0000000000003003 №) 6 статйине çакăн пек улшăнусем кĕртес:

1) 2-мĕш пунктра:

а) "б" çум пунктра "патшалăх влаçĕн саккунсем кăларакан (представительлĕ) органĕн депутачĕсем" сăмахсене "Раççей Федерацийĕн сенаторĕсем, патшалăх влаçĕн саккун кăларакан (представительлĕ) органĕн депутачĕсем" сăмахсемпе улăштарас;

ă) "к" çум пункта "суйлав тата референдумсем çинчен" сăмахсем хыççăн "е Раççей Федерацийĕн Административлă правăна пăснисем çинчен калакан кодексĕн 20^{3} тата 20^{29} статйисемпе пăхса хăварнă административлă правăна пăснă" сăмахсем хушса хурас;

б) "л" çум пункта ", çавăн пекех экстремистла е террорла организацисен ĕçĕ-хĕлĕпе çыхăннă çынсем çинчен калакан сведенисен пĕрлехи реестрне сведенисем кĕртнĕ çынсем" сăмахсем хушса хурас;

2) 10^{2}-мĕш пунктра "ăна уйăрса лартнă" сăмахсене "Чăваш Республикин Суйлав комиссийĕн çав членне уйăрса лартассине унăн компетенцийĕн шутне кĕртнĕ" сăмахсемпе улăштарас;

3) 12-мĕш пунктра:

а) "ă" çум пункта "е Раççей Федерацийĕн Административлă правăна пăснисем çинчен калакан кодексĕн 20^{3} тата 20^{29} статйисемпе пăхса хăварнă административлă правăна пăссан" сăмахсем хушса хурас;

ă) "е" çум пункта "е тата экстремистла е террорла организацисен ĕçĕ-хĕлĕпе çыхăннă çынсем çинчен калакан сведенисен пĕрлехи реестрне ун çинчен сведенисем кĕртсен" сăмахсем хушса хурас.

2 статья

Çак Саккун ăна официаллă йĕркепе пичетлесе кăларнă кунран пуçласа вăя кĕрет.

Чăваш Республикин
Пуçлăхĕ — О. Николаев

Шупашкар хули
2024 çулхи çĕртме уйăхĕн 19-мĕшĕ
47 №